28-мӗш çул тухать. Хакӗ 20 пус.

1945 АВГУСТ 24 ЭРНЕКУН 163(6914) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) Обкомӗпе Шупашкар хула комитечӗн, ЧАССР Верховный Совечӗн тата Шупашкар хула Совечӗн хаçачӗ

Верховный Главнокомандующин ПРИКАЗӖ

Инçет-Хӗвелтухӑçӗнчи совет çарӗсен Главнокомандующине
Совет Союзӗн Маршалне ВАСИЛЕВСКИЕ

Байкал леш енчи фронт çарӗсен Командующине
Совет Союзӗн Маршалне МАЛИНОВСКИЕ

Инçет-Хӗвелтухӑçӗнчи 1-мӗш фронт çарӗсен Командующине
Совет Союзӗн Маршалне МЕРЕЦКОВА

Инçет-Хӗвелтухӑçӗнчи 2-мӗш фронт çарӗсен Командующине
Арми генералне ПУРКАЕВА

Лӑпкӑ океан флочӗн Командующине
ЮМАШЕВ адмирала

Байкал леш енчи фронтӑн, Инçет-Хӗвелтухӑçӗнчи 1-мӗш тата Инçет-Хӗвелтухӑçӗнчи 2-мӗш фронтсен çарӗсем, Лӑпкӑ океан флочӗн карапӗсемпе чаçӗсем августӑн 9-мӗшӗнче Инçетри Хӗвелтухӑçӗнче Япони çарӗсене хирӗç çапӑçма тытӑнчӗç.

Артиллери хӑватлӑн персе тата авиаци пыра-пыра çапса пулӑшнипе, пирӗн çарсем МАНЬЧЖУРИ чиккисенче тӑшманӑн нумай вӑхӑтлӑха тунӑ тата шалалла инçете каякан, темиçе линирен тӑракан оборонине татса кӗчӗç, ПЫСӐК ХИНГАН ятлӑ ту хырçи урлӑ, АМУРПА УССУРИ шывӗсем урлӑ каçрӗç тата, Маньчжури ӑшнелле хӑвӑрт наступлени туса пырса, 500 километртан пуçласа 950 километра çити малалла кайрӗç, пӗтӗм МАНЬЧЖУРИЕ, КӐНТӐР САХАЛИНА тата Курильски утравсен ушкӑнӗнчи СЮМУСЮ утравӗпе ПАРАМУШИР утравне йышӑнса илчӗç.

Японецсен Квантунри çарӗ ӑнӑçсӑр контратакӑсем тунӑ хыççӑн, хирӗç тӑма чарӑнчӗ, хӗçпӑшала пӑрахрӗ те пирӗн çарсене тыткӑна парӑнчӗ.

Байкал леш енчи фронт çарӗсем, Совет Союзӗн Маршалӗ МАЛИНОВСКИЙ командир пулса ертсе пынипе, Монголин ЧОЙБАЛСАН маршал ертсе пыракан çарӗпе килӗштерсе пӗрле кӗрешсе, японецсен МАНЬЧЖУРА-ЧЖАЛОАЙНУРСКИ тата ХАМУН-АРШАНСКИ тӗреклетнӗ районӗсене татса кӗчӗç. ПЫСӐК ХИНГАН ятлӑ ту хырçи урлӑ каçрӗç, Монголин шывсӑр анлӑ хирӗсем урлӑ каçрӗç тата 950 километр малалла кайрӗç, Маньчжурин тӗп хулине ЧАНЧУНЕ тата МУКДЕН, ЦИЦИКАР, ЖЭХЭ, ДАЙРЭН, ПОРТ-АРТУР хулисене туртса илчӗç.

Инçет-Хӗвелтухçӗнчи 1-мӗш фронт çарӗсем, Совет Союзӗн Маршалӗ МЕРЕЦКОВ командир пулса ертсе пынипе, УССУРИ шывӗ урлӑ каçрӗç, японецсен ХУТОУСКИ, МИШАНЬСКИ, ПОГРАНИЧНЕНСКИ тата ДУННИНСКИ тӗреклетнӗ районӗсене татса кӗчӗç, çӳреме йывӑр тата сӑртлӑ вырӑнсем урлӑ каçрӗç, 500 километр малалла кайрӗç тата МИШАНЬ, ГИРИН, ЯНЬЦЗИ, ХАРБИН хулисене туртса илчӗç.

Инçет-Хӗвелтухӑçӗнчи 2-мӗш фронт çарӗсем, арми генералӗ ПУРКАЕВ командир пулса ертсе пынипе, АНТОНОВ контр-адмирал командир пулса ертсе пыракан Амур çинчи çар флотилийӗпе килӗштерсе пӗрле кӗрешсе, АМУР тата УССУРИ шывӗсем урлӑ каçрӗç, 550 километр малалла кайса, ЦЗЯМУСЫ, МЭРГЭНЬ, ВЭЙАНЬЧЖЕНЬ хулисене туртса илчӗç.

Çакӑнпа пӗр вӑхӑтрах фронт çарӗсем, АНДРЕЕВ вице-адмирал командир пулса ертсе пыракан Лӑпкӑ океан çинчи çурçӗрти флотилипе килӗштерсе кӗрешсе, САХАЛИН утравӗн кӑнтӑрти çурпайне туртса илчӗç, çавӑн пекех тата Курильски утравсен ушкӑнӗнчи СЮМУСЮ утравӗпе ПАРАМУШИР утравне тытса илчӗç.

Лӑпкӑ океан флочӗн карапӗсемпе чаçӗсем, ЮМАШЕВ адмирал командир пулса ертсе пынипе, Çурçӗр Корейӑра ЮКИ, РАСИН, СЕЙСИН, РАНАН, ГЕНЗАН порчӗсемпе хулисене тытса илчӗç.

Инçет-Хӗвелтухӑçӗнчи çапӑçусенче çаксем чапа тухрӗç: ИВАНОВ генерал-полковникӑн, арми генералӗн ЗАХАРОВӐН, КРУТИКОВ генерал-лейтенантӑн, ШЕВЧЕНКО генерал-лейтенантӑн, арми генералӗн МАСЛЕННИКОВӐН, ВИНОГРАДОВ генерал-полковникӑн, ЛЮДНИКОВ генерал-полковникӑн, ЛУЧИНСКИЙ генерал-лейтенантӑн, ДАНИЛОВ генерал-лейтенантӑн, МАНАГАРОВ генерал-полковникӑн, КОВАЛЕВ генерал-полковникӑн, ИВАНОВ генерал-лейтенантӑн, КРЫЛОВ генерал-полковникӑн, БЕЛОБОРОДОВ генерал-полковникӑн, ЧИСТЯКОВ генерал-полковникӑн, ЗАХВАТАЕВ генерал-лейтенантӑн, МАМОНОВ генерал-лейтенантӑн, танковӑй çарсен генерал-лейтенанчӗн ТЕРЕХИНӐН, ЧЕРЕМИСОВ генерал-майорӑн, ФОМЕНКО генерал-лейтенантӑн, РОГАЧЕВСКИЙ генерал-лейтенантӑн, СИМИНОВСКИЙ генерал-майорӑн, СПИРОВ генерал-майорӑн, ЯКОВЛЕВ генерал-майорӑн, ПРИХИДЬКО генерал-лейтенантӑн, МАСЛЕННИКОВ генерал-майорӑн, ПЕНЬКОВСКИЙ генерал-лейтенантӑн, ВОРОНЦОВ генерал-майорӑн, ЛОПАТИН генерал-лейтенантӑн, БЕЗУГЛЫЙ генерал-лейтенантӑн, ОЛЕШЕВ генерал-лейтенантӑн, ПОПОВ, генерал-майорӑн, РЕ ВУНЕНКОВ генерал-майорӑн, АФОНИН генерал-лейтенантӑн, ТЕРЕНТЬЕВ генерал-лейтенантӑн, САФИУЛИН генерал-лейтенантӑн, ПЕРЕКРЕСТОВ генерал-майорӑн, ИВАНОВ генерал-майорӑн, КСЕНОФОНТОВ генерал-лейтенантӑн, НИКИТИН генерал-лейтенантӑн, ЛОВЯГИН генерал-лейтенантӑн, СКВОРЦОВ генерал-майорӑн, МОРОЗОВ генерал-майорӑн, ШАНИН генерал-майорӑн, ГНЕЧКО генерал-майорӑн, ПАЦКОВ генерал-майорӑн, ДЬЯКОНОВ генерал-майорӑн, ЗАМАХАЕВ генерал-майорӑн, СОЛОВЬЕВ генерал-майорӑн, ПОЛЯНСКИЙ генерал-майорӑн, МАЙОРОВ полковникӑн, СОКОЛОВСКИЙ генерал-майорӑн, ГУЗЕНКО полковникӑн, СГИБНЕВ полковникӑн, КВАШНИН генерал-майорӑн, БИБИКОВ генерал-майорӑн, КОЖАНОВ генерал-майорӑн, БАСАНЕЦ генерал-майорӑн, УСАЧЕВ генерал-майорӑн, ЛОЗАНОВИЧ генерал-майорӑн, ПАПЧЕНКО генерал-майорӑн, КУШМАРЕНКО генерал-майорӑн, ЗАРЕЦКИЙ генерал-майорӑн, ДУБОВИК полковникӑн, ЛАЗАРЕВ полковникӑн, БАДЖЕЛИДЗЕ полковникӑн, СОБОЛЕВ генерал-майорӑн, БАЛДЫНОВ полковникӑн, КРИВОЛАПОВ генерал-майорӑн, МАЛЬЧЕВСКИЙ полковникӑн, БУШИН полковникӑн, МИЛЯЕВ генерал-майорӑн, ЗДАНОВИЧ генерал-майорӑн, КРИВОХИЖИН полковникӑн, ЗАКИРОВ полковникӑн, ШЕЛАПОВ генерал-майорӑн, КАЛИНИН генерал-майорӑн, КРАСНОВСКИЙ генерал-майорӑн, ГОРОДОВИКОВ генерал-майорӑн, КАЗАРЯН генерал-майорӑн, ГЛАДЫШЕВ генерал-майорӑн, САВИН генерал-майорӑн, СЕМЕНОВ генерал-майорӑн, СВИРС генерал-майорӑн, БАТРАКОВ генерал-майорӑн, ВИНОГРАДОВ генерал-майорӑн, МАМАЕВ генерал-майорӑн, ЧЕРЕПАНОВ генерал-майорӑн, ТИМОШЕНКО генерал-майорӑн, КУСИКИН полковникӑн, АНДРУСЕНКО полковникӑн, ЯКОВЛЕВ полковникӑн, ЗОРИН полковникӑн, СТАВЦЕВ полковникӑн, МАНУЙЛОВ полковникӑн, ГВОЗДИКОВ полковникӑн, НЕСТЕРОВ полковникӑн, ПЕЧЕНЕНКО полковникӑн, ЦИПЛЕНКОВ полковникӑн, ТУГОЛУПОВ полковникӑн, ИСАКОВ полковникӑн, ДМИТРИЕВ полковникӑн, ЛЕБЕДЕВ полковникӗн, артиллери генерал-майорӗн ШУРШИНӐН, ЖЕСТАКОВ генерал-майорӑн, МАТЮХИН генерал-майорӑн, ПОДПОРИН полковникӑн, КОТОВ подполковникӑн, ЗАВАДСКИЙ полковникӑн, ВАВИН полковникӑн, МАРОВ полковникӑн, КРЮЧКОВ генерал-майорӑн, ДЕМИН генерал-майорӑн, ВАСИЛЕВИЧ генерал-майорӑн, БАТУРОВ генерал-майорӑн, ДЬЯКОВ генерал-майорӑн, ШЕИН полковникӑн, ОГАНЕЗОВ подполковникӑн, ФОЧКИН полковникӑн, МУЛИН полковникӑн, ЗАХАРОВ полковникӑн, КОРЫЗНО подполковникӑн, ШАМСУТДИНОВ полковникӑн, ТОМИН полковникӑн, СИТНИКОВ подполковникӑн, ЮДИН подполковникӑн, МЕРКУРЬЕВ подполковникӑн, ПРИТУЛА генерал-майорӑн, АРТЕМЕНКО полковникӑн, КОЛБАСИН майорӑн, СКРЫННИКОВ подполковникӑн ЧОЛЫШЕВ майорӑн, МЕЛЬНИЧЕНКО подполковникӑн, АВРАМЕНКО майорӑн çарӗсем;

ПЛИЕВ генерал-полковникӑн, НИКИФОРОВ генерал-майорӑн, КОРКУЦА генерал-майорӑн, ДЕДЕОГЛУ генерал-майорӑн кавалерисчӗсем, Монголи çарӗн генерал-майорӗн ДОРЖИ-ПАЛАНӐН, ПЕДЕНДАШ полковникӑн, ДАРЖИ полковникӑн, ОТТСУРЕН подполковникӑн КАВАЛЕРИСЧӖСЕМ;

танковӑй çарсен генерал-полковникӗн КРАВЧЕНКӐН, танковӑй çарсен генерал-полковникӗн СОЛОМАТИНӐН, танковӑй çарсен генерал-полковникӗн КУРКИНӐН, танковӑй çарсен генерал-летенанчӗн КОНОНОВӐН, танковӑй çарсен генерал-майорӗн РАДКЕВИЧӐН, танковӑй çарсен генерал-лейтенанчӗн ШТРОМБЕРГӐН, танковӑй çарсен генерал-лейтенанчӗн КАТКОВӐН, танковӑй çарсен генерал-лейтенанчӗн ВОЛКОВӐН, танковӑй çарсен генерал-лейтенанчӗн САВЕЛЬЕВӐН, танковӑй çарсен генерал-лейтенанчӗн ВАСИЛЬЕВӐН, танковӑй çарсен генерал-майорӗн САВЧЕНКӐН, танковӑй çарсен генерал-майорӗн ЦИНЧЕНКӐН, ПАНЧЕНКО полковникӑн, танковӑй çарсен генерал-майорӗн СЕМЕНЮКӐН, СУПЯН полковникӑн, СОЗЫКИН полковникӑн, танковӑй çарсен генерал-майорӗн ТРОИЦКИН, ВОРОНКОВ полковникӑн, ИВАНОВИЧ полковникӑн, МИХАЙЛОВ полковникӑн, СЮНЬКОВ полковникӑн, ЖИЛИН полковникӑн, ГОРЛАЧ подполковникӑн, ОСТАПЕНКО полковникӑн, танковӑй çарсен генерал-майорӗн ТАРАНОВӐН, МАСЛЕННИКОВ полковникӑн, ВОРОНОВ полковникӑн, СОРОЧИНСКИЙ подполковникӑн, СЕЛЕЗНЕВ полковникӑн, ЛАПТЕВ полковникӑн, ЛИПИЧЕВ полковникӑн, ШУЛЬМЕЙСТЕР подполковникӑн, ПРОКОФЬЕВ подполковникӑн, ОЧАКОВСКИЙ подполковникӑн, ПОРНЕР полковникӑн, КУРНОСОВ подполковникӑн, СОЛОВЕЙ подполковникӑн, СМЕТАНИН подполковникӑн, ИВАНУШКИН подполковникӑн, ПОПОВ подполковникӑн, ДОРОЖИНСКИЙ подполковникӑн, НАРПОВ полковникӑн, ВЕЛИЧКО полковникӑн, ОБРУЧ полковникӑн, ПАНОВ полковникӑн, СУХОВАРОВ полковникӑн, АФАНАСЬЕВ полковникӑн, ИЛЮХИН полковникӑн, ЛЕНМАЙСУРУН полковникӑн, ЧЕПЛЫГИН подполковникӑн, НИКИТИН подполковникӑн, КРУПЕЦКИЙ подполковникӑн, МОРОЗОВ подполковникӑн, АНИЩИК подполковникӑн, КУЗЬМИН подполковникӑн, ЯКОВЛЕВ подполковникӑн, КОРНЕЕВ подполковникӑн, КАРАУЛОВ подполковникӑн, ВИНОКУРОВ полковникӑн, КУЗНЕЦОВ подполковникӑн, ПОТАПОВ подполковникӑн, ЗАДНИЧЕНКО подполковникӑн, ТИМИРГАЛЕЕВ подполковникӑн ТАНКИСЧӖСЕМ;

ФРОЛОВ вице-адмиралӑн, ИВАНОВСКИЙ контр-адмиралӑн, ФЕДОРОВ контр-адмиралӑн, ТРУШИН генерал-майорӑн, 1-мӗш рангри капитанӑн СТУДЕНИЧНИКОВӐН, 1-мӗш рангри капитанӑн КАПАНАДЗЕН, 2-мӗш рангри капитанӑн КУХТАН, 1-мӗш рангри капитанӑн ПОНОМАРЕВӐН, 1-мӗш рангри капитанӑн ПОТАПЕНКӐН, 1-мӗш рангри капитанӑн ПОЛТАВНЫЙӐН, 1-мӗш рангри капитанӑн ТАНКЕВИЧӐН, 2-мӗш рангри капитанӑн КРЫНОВӐН, çыран хӗрринчи служба генерал-майорӗн ДАНКОВНИКОВӐН, 3-мӗш рангри капитанӑн БЕСПАЛОВӐН, 3-мӗш рангри капитанӑн ТУЛИНӐН, БАРАБОЛЬКО майорӑн, 3-мӗш рангри капитанӑн АБЫЗОВӐН, 2-мӗш рангри капитанӑн МИРОНОВӐН, РЕУТОВ майорӑн, ЗАХАРЕНКО старши лейтенантӑн, ЛЕОНОВ старши лейтенантӑн, КУРАТЬЕВ капитан-лейтенантӑн МОРЯКӖСЕМ;

артиллери маршалӗн ЧИСТЯКОВӐН, артиллери генерал-полковникӗн ФОМИНӐН, артиллери генерал-полковникӗн ДЕГТЯРОВӐН, артиллери генерал-лейтенанчӗн ПАРСЕГОВӐН, артиллери генерал-лейтенанчӗн БАЖАНОВӐН, артиллери генерал-майорӗн ПЕТРОПАВЛОВСКИН, артиллери генерал-майорӗн САМОЙЛОВӐН, артиллери генерал-лейтенанчӗн ВОЕВОДИНӐН, артиллери генерал-майорӗн АЛЕКСЕЕВӐН, артиллери генерал-майорӗн КУЛИКОВӐН, артиллери генерал-лейтенанчӗн ФЕДОРОВӐН, артиллери генерал-лейтенанчӗн КАЗАКОВӐН, артиллери генерал-лейтенанчӗн ЦИКАЛӐН, артиллери генерал-лейтенанчӗн МАКАРОВӐН, артиллери генерал-майорӗн ПОПОВӐН, ПОГОРЕЛЫЙ полковникӑн, ЕРМАКОВ полковникӑн, ОСОКИН полковникӑн, ПАВЛОВ-РАЗИН полковникӑн, ШКЛЯРЕНКО полковникӑн, СМИРНОВ полковникӑн, ЖИВУЦКИЙ полковникӑн, ПАСТУХ полковникӑн, БОЙКО полковникӑн, МАКСИМЕНКО полковникӑн, ЧЕРНОМАЗ полковникӑн, ШАЛИМА полковникӑн, ДИДЕНКО полковникӑн, ЛЕНСКИЙ майорӑн, БАРАНОВ подполковникӑн, СТЕБАКОВ майорӑн, СОКОЛОВ полковникӑн, ПОТИФОРОВ полковникӑн, ВАСИЛЬЕВ полковникӑн, ВОЛКОВ полковникӑн, БОГДАНОВ полковникӑн, МИЦКЕВИЧ полковникӑн, КАТУНИН полковникӑн, РЕУТОВ полковникӑн, НЕСВЕТАЙЛО полковникӑн, БАЛАГУРОВ полковникӑн, ЛУКЬЯНОВ полковникӑн, ЕРШОВ полковникӑн, ТАРАСОВ полковникӑн, МИШНИН полковникӑн, СТЕПАНЦЕВ полковникӑн, КИРИЛЛОВ полковникӑн, КОРОЛЕВ полковникӑн, АРУТЮНЯН полковникӑн, МЕНЬШИКОВ полковникӑн, ЧУМАК полковникӑн, КРАСИЛЬНИКОВ полковникӑн, ШУТОВ полковникӑн, АЙРАПЕТОВ полковникӑн, РОМАНОВ полковникӑн, ИВАНОВ полковникӑн, ГОЛОВКО полковникӑн, БОГУШЕВ полковникӑн, СЫЧУГОВ полковникӑн, ЧАЙКОВСКИЙ полковникӑн, САПОЖНИКОВ полковникӑн, РЕПЬЕВ полковникӑн, НОВОДРАНОВ полковникӑн, ИВАНОВ полковникӑн, ГАЦКО полковникӑн, КУЗНЕЦОВ подполковникӑн, КАЗЕВАДЗЕ полковникӑн, ТАНОРСКИЙ майорӑн, ОЛЕНИН подполковникӑн, ГАУСТЯН майорӑн, НЕХИМЧУК подполковникӑн, ШИМАЕВ подполковникӑн, НЕХЛЮДОВ майорӑн АРТИЛЛЕРИСЧӖСЕМ;

авиацин главнӑй маршалӗн НОВИКОВӐН, авиаци маршалӗн ХУДЯКОВӐН, авиаци генерал-полковникӗн СОКОЛОВӐН, авиаци генерал-полковникӗн ЖИГАРЕВӐН, авиаци генерал-лейтенанчӗн ЛЕМЕШКӐН, авиаци генерал-майорӗн ДЗЮБАН, авиаци генерал-лейтенанчӗн СЕЛЕЗНЕВӐН, авиаци генерал-майорӗн СТЕПАНОВӐН, авиаци генерал-майорӗн СКОКӐН, авиаци генерал-лейтенанчӗн УШАНОВӐН, авиаци генерал-майорӗн ДУБОШИНӐН, авиаци генерал-майорӗн ЗАЙСАНОВӐН, авиаци генерал-майорӗн ШЕЛКИНӐН, авиаци генерал-майорӗн СУЧКОВӐН, БЕЛЫЙ полковникӑн, ЛЕБЕДЕВ полковникӑн, ФИНОГЕНОВ полковникӑн, САЖИН полковникӑн, СИВАЕВ полковникӑн, САВЕЛЬЕВ полковникӑн, ЕРОХИН полковникӑн, ПЛЕШЕНКО полковникӑн, СУХАЧЕВ полковникӑн, ТУРЕНКО полковникӑн, ФОКИН полковникӑн, ГОРСКИЙ полковникӑн, КОРОБЕЙНИКОВ подполковникӑн, КАЛИНУШКИН полковникӑн, ФЕДОРЕНКО полковникӑн, МИХАЙЛОВ полковникӑн, НЕМЦЕВИЧ полковникӑн, КИСЛОВ полковникӑн, МАКАРОВ подполковникӑн, НЮХТИЛИН полковникӑн, ГОРЛОВ полковникӑн, ВОЛОДИН полковникӑн, КОЧЕРГИН подполковникӑн, ЕРЕМИН подполковникӑн, ЦЕДРИН подполковникӑн, СИЛАЕВ подполковникӑн, БРОНЗА. подполковникӑн, МИШЕНКО полковникӑн, СОЛОМАХИН подполковникӑн, БОРТАШОВ полковникӑн, РОМАНЕНКО полковникӑн, КОВАЛЕНКО подполковникӑн, НИЖЕГОРОДЦЕВ подполковникӑн, СИДИН майорӑн, НЕХАЕВ майорӑн ЛЕТЧИКӖСЕМ;

инженери çарӗсен генерал-полковникӗн ЦИРЛИНӐН, инженери çарӗсен генерал-полковникӗн ХРЕНОВӐН, инженери çарӗсен генерал-лейтенанчӗн МОЛЕВӐН, ТИМОШЕНКО полковникӑн, АЛТОНЕН полковникӑн, ФАДЕЕВ полковникӑн, инженери çарӗсен генерал-майорӗн ТУПИЧЕВӐН, СУДЬИН подполковникӑн, ЛЕЙМАН полковникӑн, СОФРОНОВ полковникӑн, ЕФАНОВ полковникӑн, ГАРПИНИЧ полковникӑн, НИКОЛАЕВ полковникӑн, МОРЧАК полковникӑн, СОКОЛОВ полковникӑн, КНОРИН полковникӑн, ЧУДЕСЕНКО подполковникӑн, МАРИЧЕВ подполковникӑн, БУДИЛОВ подполковникӑн, ПОНОМАРЕНКО подполковникӑн, КОВА майорӑн, ЛИЗУНОВ майорӑн, ЛАГЕРЕВ майорӑн, УФИМЦЕВ майорӑн, ПОПОВ полковникӑн, АБАКУМОВ полковникӑн, ПАРХОМЧУК полковникӑн, ГЛУХОВИЧ полковникӑн, ИСАЕВ полковникӑн, СВЕШНИКОВ полковникӑн, СЕМЕНОВ подполковникӑн, КОРБУТ майорӑн, ЧЕРНЕЦ майорӑн, ЛАПИК подполковникӑн, НУСЬНОВ майорӑн, КОСУЛЬНИКОВ майорӑн, ТРИГОР капитанӑн, ТКАЧЕВ капитанӑн, ПОКРОЕВ капитанӑн САПЕРӖСЕМ;

çыхӑну çарӗсен генерал-полковникӑн ПСУРЦЕВӐН, çыхӑну çарӗсен генерал-полковникӗн ЛЕОНОВӐН, çыхӑну çарӗсен генерал-лейтенанчӗн ДОБЫКИНӐН, çыхӑну çарӗсен генерал-майорӗн НОВИННИЦКИН, çыхӑну çарӗсен генерал-майорӗн СОРОКИНӐН, çыхӑну çарӗсен генерал-майорӗн БАРАНОВӐН, çыхӑну çарӗсен генерал-майорӗн БОРОДЯГИНӐН, ШЕРБУДА полковникӑн, ПРИХОДАЙ полковникӑн, КУРГАЕВ полковникӑн, ДОЛЕНКО полковникӑн, МАКАРЕНКО полковникӑн, ЕВДОКИМОВ полковникӑн, ЗАК подполковникӑн, КОРОЛЕВ полковникӑн, СИТНИКОВ полковникӑн, государство хӑрушсӑрлӑх полковникӗн КАРПОВӐН, ЛОБАНОВ полковникӑн, РОМАНЕНКО подполковникӑн, АХМЕРОВ майорӑн, ФИЛАТОВ инженер-майорӑн, ТКАЧ капитанӑн СВЯЗИСЧӖСЕМ чапа тухрӗç.

Тунӑ çӗнтерӗве ялан-лӑха палӑртса хӑварас тесе, Инçетри Хӗвелтухӑçӗнчи çапӑçусенче уйрӑмах чапа тухнӑ соединенисемпе чаçсене тата карапсене «ХИНГАНСКИ», «АМУРСКИ», «УССУРИЙСКИ», «ХАРБИНСКИ», «МУКДЕНСКИ», «САХАЛИНСКИ», «КУРИЛЬСКИ», «ПОРТ-АРТУРСКИ» тесе ят пама тата орденсемпе наградӑлама тӑратас.

Паян, августӑн 23-мӗшӗнче, 22 сехетре пирӗн Тӑван çӗршыв столици МУСКАВ, виççӗр çирӗм тӑватӑ тупӑпа çирӗм тӑватӑ хут пӗр харӑс персе, Байкал леш енчи, Инçет-Хӗвелтухӑçӗнчи çарсене, Лӑпкӑ океанри флота, çавӑн пекех тата ЧОЙБАЛСАН Маршалӑн Монголи çарне, МАНЬЧЖУРИЕ, КӐНТӐР САХАЛИНА тата КУРИЛЬСКИ утравсен пӗр пайне ирӗке кӑларнӑскерсене, Тӑван çӗршыв ячӗпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан çарсемпе Тинӗс-Çар Флотне, Инçетри Хӗвелтухӑçӗнче японецсене хирӗç çапӑçнӑскерсене, питӗ чаплӑ çапӑçнӑшӑн ТАВ ТӐВАТӐП.

Хамӑр Тӑван çӗршывӑн ирӗклӗхӗпе никама пӑхӑнмансӑхӗшӗн çапӑçса вилнӗ геройсене ӗмӗр-ӗмӗр мухтав!

Сывӑ пултӑр та тӗреклентӗр пытӑр çӗнтерӳллӗ Хӗрлӗ Çарпа Тинӗс-Çар Флочӗ!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзӗн Генералиссимусӗ И. СТАЛИН.

1945 çулхи августӑн 23-мӗшӗ. № 372.

Совет Информаци Бюровӗнчен

Августӑн 22-мӗшӗнчи оперативнӑй сводка

Августӑн 22-мӗшӗнче Маньчжурире тата САХАЛИН утравӗн кӑнтӑр пайӗнче пирӗн çарсем кӑтартса панӑ енсенелле малалла куçса пынӑ.

Пирӗн авиацин десант ушкӑнӗсем ДАЙРЭН хулипе ПОРТ-АРТУР хулинче аннӑ та çав хуласенчи Япони гарнизонӗсене хӗçпӑшалсӑрлантарма тытӑннӑ.

КАМЧАТКӐРАН кӑнтӑртарахри районра пирӗн çарсем Курильски утравсен тӑрӑхӗнчи çурçӗрти СЮМУСЮ ятлӑ утрав çине аннӑ. Японин ку утрав çинчи çарӗсем хӗçпӑшала пӑрахса, пирӗн çарсене тыткӑна парӑнма пуçланӑ.

Августӑн 21-мӗшӗнче пирӗн çарсем японецсен 71 пин салтакӗпе офицерне тыткӑна илнӗ, вӗсен шутӗнче 20 генерал. Тыткӑна илнисем хушшинче Квантунри çарӑн 44-мӗш арми йӗн командующийӗ ХОНГС генерал-лейтенант пур.

Квантунри çарӑн парӑнакан чаçӗсемпе соединенийӗсене йышӑнасси малалла пырать.

СОВИНФОРМБЮРО.

Августӑн 23-мӗшӗнчи оперативнӑй сводка

Августӑн 23-мӗшӗнче Маньчжурире тата САХАЛИН утравӗн кӑнтӑр пайӗнче пирӗн çарсем малалла куçса пынӑ.

БАЙКАЛ ЛЕШ ЕНЧИ ФРОНТ çарӗсем Маньчжурин кӑнтӑр пайӗнче ЛИНЬЮАНЬ, ЛЯОЯН хулисене йышӑнса илнӗ тата ПОРТ-АРТУРА пырса кӗрсе унта малтан антарнӑ авиадесантпа пӗрлешнӗ.

ИНÇЕТ-ХӖВЕЛТУХӐÇӖНЧИ 2-мӗш ФРОНТ çарӗсем САХАЛИН утравӗ çинче МОТОТОМАРИ, КОНОТОРО хулисене йышӑнса илнӗ.

КАМЧАТКӐРАН кӑнтӑр еннерехре фронт çарӗсем Курильски утравсен ушкӑнне кӗрекен СЮМУСЮ, ПАРАМШУР утравӗсене йышӑнса илнӗ.

МУКДЕНРИ аэродромра пирӗн çарсем пуканелле Маньчжоу-Го государствин Пу-И «императорне», Япони лартнӑскере, хӑйӗн ушкӑнӗпе пӗрле тытнӑ.

Августӑн 22-мӗшӗнче пирӗн çарсем Япони салтакӗсемпе офицерӗсене 35.000 çынна, вӑл шутра 15 генерала тыткӑна илнӗ.

Августӑн 9-мӗшӗпе 22-мӗшӗ хушшинче, малтанласа шутласа пӑхнӑ тӑрӑх, çакӑн пек трофейӑсем тытса илнӗ: самолетсем—483, танксемпе хӑй тӗллӗн çӳрекен тупӑсем—171, хир туппиcем—642, миномётсем—298, пулеметсем—2.764, боеприпассен, хӗçпӑшал, снаряжени тата апат-çимӗç склачӗсем—481.

Япони çарӗн парӑнакан чаçӗсемпе соединенийӗсене йышӑнас ӗç малалла пырать.

СОВИНФОРМБЮРО.

1945 çулхи тырпултан государствӑна тырӑ памалли плана срокчен тултарас тата кӗрхи тырӑсем акассипе кӗрхи çӗртме сухалассине вӑхӑтра та пысӑк пахалӑхлӑн туса ирттерес тӗлӗшпе

Чӑваш республикинчи колхозниксемпе колхозницӑсем, совхозсемпе МТС работникӗсем, ялхуçалӑх специалисчӗсем илнӗ

ОБЯЗАТЕЛЬСТВӐСЕМ

Орденлӑ Чӑваш республикинчи ӗç хресченӗсем, пирӗн аслӑ Тӑван çӗршыври мӗнпур ӗççыннисемпе пӗрле мӗнпур вӑя хурса ӗçлесе Хӗрлӗ Çара гитлерла Германие тата Япони агрессорне хирӗç кӗрешме ывӑнма пӗлмесӗр пулӑшса тӑчӗç. Отечественнӑй вӑрçӑ çулӗсенче пирӗн республикӑри уйхирсенче тырпул тухӑçлӑхӗ, вӑрçӑччен хипе танлаштарсан, чакмарӗ, вӑл ӳссе пычӗ. Вӑрçӑн тӑватӑ çулӗ хушшинче Чӑваш республикинчи колхозсем государствӑна вӑрçӑччен хи тӑватӑ çул хушшинче панинчен 6,8 миллион пӑт ытларах тырӑ пачӗç. Кӑçал эпир çурхи уйхир ӗçӗсене агротехникӑн чи лайӑх срокӗсенче тата пысӑк пахалӑхлӑн туса ирттертӗмӗр.

Пирӗн уйхирсенче пуян тырпул ӳссе çитӗнчӗ. Ялхуçалӑх çулӗн чи паха та чи ответлӑ тапхӑрӗ çитрӗ. Çав тапхӑрти пысӑк ӗçсене ӑнӑçлӑн туса ирттерниччен пирӗн государствӑн вӑрçӑри экономика хӑвачӗ малалла тӗреклениессӗ тата пирӗн колхоз хресченӗсен малашнехи пурнӑçӗ ырӑ пуласси килет.

Кубань колхозникӗсем государствӑна тырӑ памалли плана срокчен тултарассишӗн тата кӗракине вӑхӑтра та пысӑк пахалӑхлӑн туса ирттерессишӗн Пӗтӗм Союзри социализмлӑ ӑмӑрту ялавне çӗклерӗç.

Эпир, Чӑваш республикинчи колхозниксемпе колхозницӑсем, мӗнпур ялхуçалӑх работникӗсем, Кубань колхозникӗсен патриотла чӗнӗвне пӗтӗм чун-чӗререн ырласа, Пӗтӗм Союзри социализмлӑ ӑмӑртӑва хутшӑнатпӑр, хамӑр çине çакӑн пек обязательствӑсем илетпӗр:

1. Тырпула хӑвӑрт та пӗр тӑккаламасӑр пухса кӗртетпӗр, тырӑ вырма тытӑннӑ малтанхи кунсенчен пуçласах государствӑна тырӑ парас ӗçе организацилетпӗр, ноябрӗн 1-мӗшӗнчен кая юлмасӑр государствӑна тырӑ памалли плана пӗтӗмӗшпех тултаратпӑр.

2. Килес çулхи тырпулӑн çирӗп никӗсне хывса хӑваратпӑр. Кӗрхи тырӑсене кӗске срокра тата агротехника кӑтартнӑ пек пысӑк пахалӑхлӑн акса хӑваратпӑр, кӗракн ӗçӗсене 1945 çулхи сентябрӗн 5-мӗшӗнчен кая юлмасӑр вӗçлетпӗр.

3. Кӗрхи çӗртме тумалли плана октябрӗн 15-мӗшӗ тӗлне пӗтӗмӗшпех тултаратпӑр.

Çак обязательствӑсене пурнӑçа кӗртес тесе, çапла вара хамӑрӑн Тӑван çӗршыв валли ытлӑн-çитлӗн апат-çимӗç тата чӗртавар туса парас тесе, эпир пӗтӗм вӑя хурӑпӑр.

Сывӑ пултӑр пирӗн Совет халӑхӗ!

Сывӑ пултӑр пире çӗнтерӳсем тума организацилекен Ленинпа Сталинӑн аслӑ партийӗ!

Сывӑ пултӑр пирӗн паттӑр Хӗрлӗ Çар!

Сывӑ пултӑр пирӗн ӑслӑ çулпуç тата аслӑ полководец Совет Союзӗн Генералиссимусӗ Сталин юлташ!

Чӑваш АССР-ӗнчи пур колхозсенче те, совхозсемпе МТС-сенче те сӳтсе-явса йышӑннӑ.

ВĂРНАР МТС-не КУÇСА ÇӲРЕКЕН ХĔРЛĔ ЯЛАВСЕМ ПАНĂ

ВĂРНАР, августăн 23-мĕшĕ. (Телефонпа). Çак кунсенче Вăрнар МТС-не çураки планне ăнăçлă тултарассишĕн пынă социализмлă ăмăртура мала тухнăшăн СССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн тата Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавĕсене пачĕç. Хĕрлĕ Ялавсем панă ятпа пулса иртнĕ чаплă пухăва МТС-ри трактористсемпе трактористкăсем, комбайнерсемпе комбайнеркăсем, ялхуçалăх специалисчĕсемпе колхоз председателĕсем тата партипе совет активĕ пухăннă.

СССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне Сорокин юлташ МТС директорне Никонов юлташа парса, çуракинче пысăк ăнăçлăхпа ĕçлесе СССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн Хĕрлĕ Ялавне тата укçан 10.000 тенкĕ преми илнĕ ятпа МТС коллективне сывлăх сунса саламларĕ тата малашне те ывăнма пĕлмесĕр ĕçлесе пысăк çитĕнӳ тума сĕнчĕ.

МТС директорĕ Никонов юлташ куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялава илсе хумханулă сăмах тухса каларĕ.

— Кăçалхи çуракине эпир Отечественнăй аслă вăрçă пирĕн çĕршыв çĕнтерннпе вĕçленнĕ тапхăрта ирттертĕмĕр. Фашистла Германие Хĕрлĕ Çар аркатса тăкнипе лăвхаланса пирĕн трактористсемпе трактористкăсем ывăнма пĕлмесĕр ĕçлерĕç. Пирĕн коллектив тăрăшса ĕçленине сая [illegible] — колхозсен уйхирĕнче тырпул [illegible] чĕнчĕ. Халĕ ĕнтĕ пирĕн çав тырпула пĕтĕмпех лайăх пухса кĕртме пулăшмалла. Çак чаплă Хĕрлĕ Ялава хамăр алăрах хăварассишĕн эпир пĕтĕм вăя хурса ĕçлĕпĕр. Пирĕн коллектив тракторсемпе тумалли çулталăкри плана 128 процент ытла тултарчĕ. П. Тойдеряков, Михайлов, Мишаков, Алексеев юлташсем ертсе пыракан бригадăсем тракторсемпе тумалли çулталăкри плана кашниех 150—250-шар процент тултарчĕç. Паллă трактористкăсем Нина Егорова тата Ульяна Порфирьева юлташсем хăйсен çулталăкри планне 300 процент тултарнă.

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссарĕ Широв юлташ пачĕ. Вăл хăйĕн саламлă сăмахĕнче тырпул пухса кĕртес ĕçре МТС умĕнче тăракан задачăсем çинчен каласа пачĕ тата малашне те социализмлă ăмăрту ялавне çӳле çĕклесе пысăк çитĕнӳсем тума чĕнчĕ.

Пухура МТС-ри трактористсем, комбайнерсем, ялхуçалăх специалисчĕсем тата колхоз представителĕсем туха-туха каларĕç.

МТС коллективĕ çулталăкра тумалли ĕç планне 200 процентран кая мар тултарма обязательство илчĕ.

РЕСПУБЛИКĂРИ КОЛХОЗСЕНЧЕ АВГУСТĂН 20-мĕшĕ ТĔЛНЕ ТЫРПУЛ ПУХСА КĔРТЕС ТАТА ГОСУДАРСТВĂНА ТЫРĂ ПАРАС ĔÇ МĔНЛЕ ПЫНИНЕ КĂТАРТАКАН

СВОДКА

(Процентпа)

РАЙОНСЕМ	Тырă вырнă	Капана хывнă	Авăн çапнă	Государствăна тырă панă
Советски	56.7	15.6	15.6	2.1
Вăрнар	55.4	20.3	16.5	2.8
Шăхасан	49.1	20.4	19.9	2.6
Красноармейски	48.5	19.2	17.3	3.0
Хĕрлĕ Чутай	48.2	20.5	18.3	3.1
Етĕрне	47.4	17.7	13.9	5.2
Чкаловски	46.5	26.6	16.2	0.4
Муркаш	46.4	24.7	24.7	2.9
Калинино	46.2	15.1	11.3	5.4
Вăрмар	46.1	16.6	12.3	1.8
Çĕрпӳ	46.0	19.8	18.3	7.0
Шăмăршă	45.0	54.7	22.6	0.3
Тăвай	44.9	24.2	20.4	2.0
Куславкка	44.8	25.8	19.3	3.8
Сĕнтĕрвăрри	44.2	27.7	22.0	8.7
Шупашкар	44.1	35.5	26.8	5.9
Октябрьски	43.1	30.6	23.9	5.9
Ишлей	42.8	19.1	18.6	1.6
Пăрачкав	42.4	31.7	16.4	3.4
Елчĕк	42.4	17.1	14.8	3.6
Чурачăк	41.3	28.4	22.9	8.3
Канаш	41.2	21.5	19.2	1.9
Первомайски	40.6	18.1	16.0	0.4
Сĕнтĕр	40.3	19.9	17.8	3.9
Элĕк	40.2	15.9	14.0	3.3
Улатăр	37.7	33.8	19.6	2.8
Комсомольски	36.5	26.3	23.5	1.4
Кувакино	31.2	34.7	27.1	0.6
Йĕпреç	31.1	32.3	24.4	0.7
Çĕмĕрле	31.0	18.9	11.3	2.3

РЕСПУБЛИКĂРИ КОЛХОЗСЕНЧЕ КĔРХИ ТЫРĂСЕМ АКМАЛЛИ ПЛАНА АВГУСТĂН 20-мĕшĕ ТĔЛНЕ МĔН ЧУХЛĔ ТУЛТАРНИНЕ КĂТАРТАКАН

СВОДКА

(Процентпа)

РАЙОНСЕМ	Тырă акнă
Чурачăк	47,2
Красноармейски	46,6
Елчĕк	45,3
Муркаш	41,2
Шăхасан	41,0
Совотски	39,9
Калинино	39,1
Сĕнтĕр	38,3
Шупашкар	37,9
Чкаловски	35,0
Комсомольски	34,8
Октябрьски	33,5
Вăрнар	32,7
Шăмăршă	31,9
Элĕк	30,7
Куславкка	28,5
Çĕрпӳ	27,7
Етĕрне	27,0
Хĕрлĕ Чутай	25,3
Первомайски	25,0
Тăвай	21,5
Канаш	21,2
Пăрачкав	21,0
Вăрмар	20,7
Йĕпреç	20,6
Сĕнтĕрвăрри	15,3
Кувакино	14,9
Улатăр	12,9
Ишлей	10,6
Çĕмĕрле	7,3

Комбайнер Фаддей Семенов юлташ 119 гектар вырса пухнă

Йĕпреç МТС-чи комбайнер Фаддей Семенов юлташ «Коммунар» комбайнпа çичĕ ĕç кунĕнче, августăн 22-мĕшĕ тĕлне, 119 гектар вырса пухнă. Тырă вырса пĕтериччен Семенов юлташ 500 гектар вырса пухма обязательство илнĕ.

Йĕпреç МТС-ĕнчи комбайнера Фаддей Семенов юлташа

Комбайнпа тырă вырса пухмалли плана тултарнă май, Сире саламласа сывлăх сунатăп. Çичĕ кун хушшинче 119 гектар вырса пухса Эсир пысăк ĕç тухăçлăхĕ кăтартрăр. Сире хăвăр çине илнĕ обязательствăна ăнăçлăн пурнăçлама тата пысăк çитĕнӳ тума сĕнетĕп.

Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссарĕ И. ШИРОВ.

Елчĕк районĕ ыраш вырса пĕтерчĕ

ЕЛЧĔК, августăн 23-мĕшĕ. (Телефонпа). Августăн 22-мĕшĕ тĕлне районра 10.431 гектар ыраш вырса, пур колхозсем те ыраш вырса пĕтерчĕ. Паянхи кун тĕлне 4.532 гектар çуртырри вырнă. Жнейкăсемпе пурĕ 6.555 гектар вырнă. Районри колхозсенче халĕ 3451 гектар çинчен кĕлтесене турттарса капана хывнă. 2853 гектар çинчи тырра çапнă. 59 колхоз государствăна тырă пама тытăннă.

Тырпул пухса кĕртес ĕç орденлă «Ново-Ищеряково» колхозра, Ворошилов ячĕпе тăракан Хĕрлĕ Ялавлă колхозра, «Хунав», «Марс», «Осоавиахим», Крупская ячĕпе тăракан колхозсенче уйрăмах ăнăçлăн пырать. Çак колхозсем пур тĕрлĕ тĕштырăсене те паян-ыран вырса пĕтереççĕ тата вĕсем государствăна тырă памалли графика та ытлашшипех тултарса пыраççĕ.

Районĕпе 6379 гектар ыраш акнă, вăл шутран 3922 гектарне машинăпа акнă.

П. КОЗЛОВ.

Çурлапа 0,44 гектар вырнă

Сĕнтĕр районĕнчи «Майăн пĕрремĕшĕ» колхозра уйрăм сдельщинăпа тата уйрăм участоксенче ĕçлеççĕ. Кунта кулленхи нормăна ирттерсе тултаракансен йышĕ пысăк. Мария Щипалова юлташ калама çук тăрăшса ĕçлет. Вăл кашни кунах хăйĕн нормине 400 процент тата ытларах та тултарать. Августăн 16-мĕшĕнче вăл пĕр кунта 0,44 гектар тырă вырнă. Мария Щипалова хăй вырнă тырра хăйех типĕтсе сыхать тата çĕмел тăвать. Юлашки виçĕ кун хушшинче вăл пĕр гектар ытла ыраш вырса пуçтарнă.

Комбайнерсем ĕçре

ШĂХАСАН, августăн 23-мĕшĕ. (Телефонпа). МТС-ăн 12 комбайнĕ те колхозсенче çуртырри выраççĕ. Комбайнер Н. Чернов юлташ паянхи кун тĕлне 83 гектар, Н. Андреев юлташ 65 гектар вырса пухнă. Комбайнсем юлашки икĕ-виçĕ кун хушшинче лайăх ĕçлеме тытăннă. Августăн 23-мĕшĕ тĕлне МТС пурĕ 850 гектара яхăн вырса пухнă.

* * *

ÇĔРПӲ, августăн 23-мĕшĕ (Телефонпа). МТС-ăн 8 комбайнĕ колхозсенче ĕçлет. Юлашки икĕ-виçĕ кун хушшинче вĕсем çуртырри вырма тытăнчĕç. Комбайнер Ганжа юлташ 1905 çул ячĕпе тăракан колхозра икĕ кун хушшинче 35 гектар тырă вырнă. Виçĕ кун хушшинче В. Иванов 45 гектар, Громов 45 гектар, Люсин 23 гектар, Баранов 30 гектар тырă вырса пухнă. Кулленхи нормăпа кашни комбайнерах тултарса пырать.

В. КЛЕМЕНТЬЕВА.
МТС агрономĕ.

Квислинга суд туни

ОСЛО, августăн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Паян кунта Квислинга суд тăвакан уçă суд процесĕ пуçланнă. Суд ларăвне итлеме дипломатиллĕ корпус членĕсем, Норвегири официальнăй çынсем тата 250 журналист ытла пынă. 400 çын вырнаçмалăх зала процесса кĕме ĕмĕтленекен çынсен вуннăмĕш пайĕ те вырнаçайман.

Суда Солем судья председатель пулса ертсе пырать. Унăн составĕнче 9 çын, вĕсенчен—4 юрист, 5 суд заседателĕ. Айăплаканĕ — государство прокурорĕ Шĕедт, хӳтĕлекенĕ—Берг адвокат. Ăна Квислинг хăйне хӳтĕлеттерме кăмăл тунă.

Суд ларăвĕ уçăлсан, виçĕ сехет хушши айăпласа çырнине вуланă. Унта çапла каланă:

1940 çулхи апрель уйăхĕнче, Германи çарĕсем Норвегие тапăнса кĕрсен, Квислинг пуканелле правительство туса хунă. 1940 çулхи апрелĕн 10-мĕшĕнче вăл Норвеги правительствин çара мобилизацилесси çинчен кăларнă приказне пăрахăçланă. Нимĕçсене хирĕç тăракан Норвеги çарĕсене Квислинг кĕрешме пăрахма тата тыткăна парăнма хушнă. Германие кайна чухне вăл Норвегие оккупацилесси çинчен Гитлерпа малтанах калаçса татăлнă. Германи правительствине вăл Норвегие оккупацилес ĕçе туса интерес тĕлĕшпе канашсемпе кăтартусем парса тăнă. Квислинг Норвегие «аслă Германи союзĕ» çумне пĕрлештерме тăрăшнă. «Премьер-министр» пулса тăрса тата «нациллĕ пĕрлĕх» ятлă нацистла партин лидерĕ пулса тăрса, Квислинг Норвеги халăхĕ хирĕç тăнине пусарса лартма хăтланнă, нимĕçсене пур майсемпе те пулăшса пынă. Германи майлă пулса, вăл Норвегие хирĕç, çавăн пекех унăн союзникĕсене тата уйрăмах ССР Союзне хирĕç кĕрешме хĕçпăшаллă отрядсем организациленĕ.

Квислинг Норвегин конституци системине пĕтерсе лартнă тата нацистла партисĕр пуçне политикăллă пур партисене те саланса янă. Норвегире конституци тăрăх корольпе стортинг (парламент) кăна усă курма пултаракан правăсене Квислинг хăй аллине тытса илесшĕн пулнă.

Айăпласа çырнинче малалла çапла каланă: «Нимĕçсемшĕн уйрăмах хăрушă» пулса тăракан Норвеги патриочĕсене пĕтерес тесе, Квислинг пурне те тунă. Уйрăммăн илсен, вăл нимĕçсене Ханстеен адвокат «красноармеец тата коммунист» пулса тăрать тесе пĕлтернĕ. Çавăн пек пĕлтернине пула нимĕçсем 1941 çулхи сентябрĕн 10-мĕшĕнче Ханстеена персе пăрахнă. Айăпланакан пулăшнипе нимĕçсем темиçе çĕр норвежеца пере-пере пăрахнă.

Германи интересĕсене хӳтĕлесе, Квислинг 1943 çулхи августăн 14-мĕшĕнче Норвеги Совет Союзне хирĕç вăрçа тухать тесе пĕлтернĕ.

Квислинг, тĕрлĕ жулика майсемпе хăтланса, государствăн, король çемьин, учрежденисен, салатса янă политикăллă партисен тата уйрăм çынсен укçи-тенкине, художествăллă япаласемпе ытти тĕрлĕ паха япаласене хăй аллине тытса илнĕ. «Нациллĕ пĕрлĕх» ятлă хăйĕн партине Квислинг государство шутĕнчен 14 миллион крона тӳленĕ, хăйĕн хуралне тытса тăма — 7,5 миллион крона, хăйĕн «хирда» ятлă штурмовой отрячĕсене тытса тăма — 12 миллион крона, ССР Союзне хирĕç кĕрешекен отрядсене вĕрентсе хатĕрлеме,—1,2 миллион крона расходласа пĕтернĕ.

Çӳлерехре кăтартса панă мĕнпур фактсене шута илсе, Квислинга вăл тăван çĕршыва сутнă, тăшман енне ĕçлеме куçнă, конституцие пĕтерсе лартнă, нумай çынсене вĕлерсе пĕтернĕ, растратăсем тунă тата вăрланă тесе айăплаççĕ.

Суда 40 свидетель чĕннĕ. Вĕсен шутĕнче Норвегин хĕçпăшаллă вăйĕсен главнокомандующийĕ Руге генерал пур. Суд 8—9 куна пырать.

Норвегири пĕтĕм хаçатсем çакна палăртса çыраççĕ: Квислинга суд туни Норвегишĕн кăна мар, пĕтĕм тĕнчешĕн те питĕ пысăк вырăн йышăнса тăрать, теççĕ. «Фрихетен» хаçатра çапла çырнă: «Çак суд—мĕнпур прогрессиллĕ этемлĕх нацизма суд туни пулать», тенĕ.

ОСЛО, августăн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнер судăн пĕрремĕш ларăвĕнче Квислинга айăпласа çырнине вуласа панă хыççăн, суд председателĕ айăпланаканран: эсĕ «çак айăпласа çырнинче кăтартнă айăпсене пурне те, е хăшне-пĕрне йышăнса» хăвна айăплă тесе шутлатăн-и, тесе ыйтнă. Квислинг хăйне айăплă тесе шутламан.

«Апла пулсан, лар та лайăх итле»,—тенĕ суд председателĕ. Вара вăл прокурора сăмах панă. Прокурор хăйĕн сăмахĕнче Квислинг сутăнчăклăхне кăтартса паракан çĕнĕрен нумай фактсем каласа панă. Прокурорăн сăмахĕнчен çаксем паллă пулнă: 1939 çулăн малтанхи çур пайĕнче, урăхла каласан, Европăри вăрçă пуçланиччен, Квислинг Германипе çыхăнса тăнă, Германин генеральнăй штабне Норвегин çар вăрттăнлăхĕсене пĕлтернĕ.

1939 çулăн малтанхи çур пайĕнче Квислинг Германие кайнă. Кунта вăл гитлерла партин тулашри политика пайĕн руководителĕпе Альфред Розенбергпа калаçнă. Квислинг хăйĕн партийĕпе хаçатне пулăшу пама ыйтнă. Квислинг Норвегин çарпа политика положенийĕ çинчен Розенберга тăтăшах пĕлтерсе тăнă. 1939 çул вĕçĕнче вăл Норвеги стратеги тĕлĕшĕпе мĕнле вырăн йышăнса тăни çинчен Берлина доклад çырса янă, кунта вăл Норвегие нимĕç çарĕсем оккупацилеме кирли çинчен ыйту кăларса тăратнă.

1939 çулти декабрĕн 13-мĕшĕнче Квислинг Розенберга: эпĕ Норвегире переворот тума хатĕр, тесе каланă. Вăл Норвегире Германи çарĕсене апха базăсем хатĕрлеме сĕннĕ. Норвегин паха пункчĕсенче вăл, хăйĕн партийĕн членĕсем пулăшнипе, Германие майлă шпионла ĕçсем туса пынă. Шпионла сведенисене вăл Германие хăйĕн Хагелин ятлă сотрудникĕ урлă ярса тăнă. Çав Хагелин каярахпа «Квислинг правительствинче» шалти ĕçсен министрĕ пулнă. План тăрăх, нимĕçсен Норвегие 1940 çулхи март уйăхĕн пуçламăшĕнче анмалла пулнă, анчах та Норвеги çыранĕ çывăхĕнче пăр тăни ку плана пурнăçа кĕртессине 1940 çулти апрелĕн 9-мĕшĕччен хăвармалла пулнă. Тĕпчесе çакна палăртнă: Норвегие тытса илмелли плана, Гитлер çирĕплетнĕскере, пуринчен ытларах Квислинг пĕлтернĕ сведенисемпе усă курса тунă.

Гитлер панă задани тăрăх, тенĕ малалла прокурор, нимĕç çарĕсем Норвегие аннă вăхăтра Квислингăн Норвеги королĕпе правительствине тытса чармалла, вĕсене çĕршывран тухса кайма памалла мар пулнă. 1940 çулти февралĕн 9-мĕшĕнче Квислинг корольпе правительствăна арестлеме хушнă. Анчах вăл кая юлнă, мĕншĕн тесен король те, правительство та Осло хулинчен унччен тухса кайнă. Прокурор çапла каланă: Норвегири суд органĕсем ыйтнипе союзниксен следстви тăвакан влаçĕсем нимĕç пуçлăхĕсене, вăл шутра Геринга, Розенберга, Риббентропа Квислинг ĕçĕ çинчен юри допрос тунă. Кунсăр пуçне, Розенбергăн дневникне тупнă. Кунта вăрçă пуçланиччченех Квислинг нимĕçсем патĕнче ĕçре тăнине лайăх кăтартса панă.

ОСЛО, августăн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнер судăн иккĕмĕш ларăвĕнче айăпланакана допрос тунă.

Суд председателĕ: Эсир Гитлерпа тата Розенбергпа çыхăну тытнă-и?

Айăпланакан: Эпĕ вĕсемпе тĕл пулкаланă.

Суд председателĕ: Чи малтан эсир нимĕç влаçĕсемпе хăçан çыхăну тытма пуçланă?

Айăпланакан: Ман шутăмпа, ку ĕç 1939 çулхи декабрь уйăхĕнче пулнă.

Квислинг хăйне ыйтусем пама чарăнма ыйтса сăмах калама кăмăл тунă. Суд председателĕ Квислинга сăмах калама ирĕк паман. Суд халĕ Квислинг Германипе вăрçăччен мĕнле çыхăну тытнипе интересленет, тенĕ вăл.

Гитлер 50 çул тултарнине уявлама сана чĕннĕ-и тата Розенберга эсĕ чи малтанхи хут хăçан тĕл пулнă, тесе ыйтнине хирĕç айăпланакан çапла ответ панă: Розенбергпа эпĕ 1939 çулхи декабрь уйăхĕнче тĕл пултăм, ун чухнех Розенберг мана Гитлерпа çыхăнтарчĕ, тенĕ.

Малалла çакна тĕпчесе пĕлнĕ: «Квислинг правительствин» министрĕ пулнă Хагелин та çак тĕлпулура Гитлер патĕнче пулнă. Хагелин 1936 çултан пуçласах Квислинга Берлинпа çыхăнтарса тăнă. Кун умĕн Хагелин нумай çул хушши Германире пурăннă. Унта вăл Крупп фирмин суту-илӳ агенчĕ тата нимĕç шпионĕ пулса ĕçленĕ.

Эсĕ Германирен укçан пулăшу илнĕ-и, тесе ыйтнине хирĕç айăпланакан «илмен» тесе ответ панă.

Вара суд председателĕ тивĕçлĕ документсем кăларнă та Квислингпа унăн партийĕ нимĕçсенчен укçа-тенкĕ илнине çирĕплетсе кăтартнă. Норвегие нимĕçсем оккупацилеччченех Квислингăн «Фритт Фольк» хаçатне пысăклатма тĕрлĕрен майпа 50 пин крон илнĕ пулнă.

Суд Норвегие нимĕçсем оккупацилесси çине Квислинг мĕнле пăхнине каласа панă. Квислинг çапла каланă: «Эпĕ хам шутăмпа, Германирен пулăшу ыйтма май пур пуль тесе шутларăм».

Суд председателĕ Норвегире ĕçленĕ Шикеданц ятлă нимĕçĕн çырăвне вуласа парать. Ку çырăва çав нимĕçĕн Германие Розенберга пăхăнса ĕçлекен Ламмерс доктор патне ямалла пулнă. Çак çырура Квислинг çапла пĕлтернĕ: Норвегие нимĕç çарĕсене антарма хатĕрленмешкĕн 6 миллион ылттăн марка кирлĕ, тенĕ.

Суд председателĕ тата çавăн пекех Америка полковникĕ Розенбергран ыйтса пĕлнине вуласа панă. Розенберг каланă тăрăх, Квислинг Норвегие оккупацилеме васкама кирли çинчен темиçе хутчен те çырнă.

Унтан суд председателĕ: эсĕ ун чухне мĕншĕн нимĕçсене пулăшрăн, тесе ыйтнă.

Квислинг çапла ответ панă: «Эпĕ вĕсене пулăшман, эпĕ вĕсемпе лайăх пурăнас тесе шутланă. Эпĕ вĕсем çĕнтерессе шанса тăнă».

Квислинг Германин гросс-адмиралне Редера Норвегири базăсене нимĕçсене тытса илме хатĕрлес тĕлĕшпе пулăшма сĕнни çинчен калакан документа вуласа панă хыççăн, суд председателĕ: çак документ тĕрĕс-и, тесе ыйтнă. «Эпĕ ăна астумастăп», тенĕ Квислинг.

Суд председателĕ: Эсир хăвăра нимĕçсен аллине пĕрре патăр пулсан, вĕсене базăсем пама пултăр пулсан, эсир ăна ниепле те манма пултараймастăр.

Малалла судра Германире тупнă пĕр документа вуласа панă. Ку документа нимĕçсен пĕр пысăк агенчĕ Шейт çырнă. Унта вăл Норвегие оккупацилечченех Квислинга 100 пин марка пани çинчен каланă.

Судра кăтартса панă документсем Квислинг нимĕç агенчĕ пулнине питĕ лайăх çирĕплетеççĕ.

ПАВЕЛИЧА ЮГОСЛАВИ ВЛАÇĔСЕН АЛЛИНЕ ПАРАССИ

ЛОНДОН, августăн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонри радио çапла пĕлтерет: Союзниксен Австрири Верховнăй Командованийĕ Павелича Югослави влаçĕсен аллине памалла тесе йышăннă.

Япони парăнни çинчен калакан акта алă пусасси çинчен

ЛОНДОН, августăн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонри радио пĕлтернĕ тăрăх, Манила хулинче (Филиппин утравĕсем çинче) официальнăй йĕркепе çапла пĕлтернĕ: Япони парăнни çинчен калакан акта Токио бухтинче августăн 31-мĕшĕнче американецсен «Миссури» ятлă линкорĕ çинче алă пусаççĕ. Çантăлăк лайăх тăрсан, августăн 28-мĕшĕнче Токио районĕнчи аэродром çине союзниксен парашютлă çарĕсем анаççĕ. Çавăнпа пĕр вăхăтрах союзниксен тинĕс-çар тата сывлăш-çар вăйĕсем Токио бухтине кĕмелли вырăнта ларакан порта анмалла.

ЯПОНИ ДЕЛЕГАЦИЙĔ МАНИЛĂРАН ТОКИОНА ÇИТНĔ

САН-ФРАНЦИСКО, августăн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Манилăри командованийĕпе малтанлăха калаçнă хыççăн, Япони делегацийĕн членĕсем Токиона таврăннă. Вĕсем çитнĕ-çитменех Японин генеральнăй штабне кайнă. Унта вĕсем Манилăра пулса иртнĕ калаçусем çинчен пĕлтермелле.

ПĔРЛЕШНĔ НАЦИСЕН УСТАВНЕ СУН ЦЗЫ-ВЕНЬ АЛĂ ПУСНИ

ВАШИНГТОН, августăн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен государство департаментĕнче ятарласа тунă церемонире Китайăн Ĕç тăвакан Юань председателĕ Сун Цзы-вень Пĕрлешнĕ нацисен уставне алă пуснă. Сан-Франциско хулинче Китай делегацийĕ çав устава алă пуснă чухне Сун Цзы-вень унта пулман.

СОВЕТ ГРАЖДАНĔСЕНЕ ШВЕЙЦАРИРЕН ССР СОЮЗНЕ ИЛСЕ КИЛЕССИ

ПАРИЖ, августăн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Совет гражданĕсене ССР Союзне таврăс тĕлĕшпе ĕçлекен Совет Союзĕн Швейцарири çар миссийĕ августăн 11-мĕшĕнче нимĕç тыткăнĕнчен Швейцарие тарнă совет гражданĕсене Совет Союзне ăсатма тытăннă. Августăн 11-мĕшĕпе 18-мĕшĕ хушшинче Швейцарирен 4.776 совет гражданинне ССР Союзне ăсатнă.

Совет гражданĕсене Швейцарирен ССР Союзне ăсатас ĕç малалла пырать.

АМЕРИКĂРИ ПĔРЛЕШӲЛЛĔ ШТАТСЕМПЕ ФИНЛЯНДИ ХУШШИНЧИ ДИПЛОМАТИЛЛĔ ÇЫХĂНУСЕМ ПУÇЛАНАССИ ÇИНЧЕН БИРНС КАЛАСА ПАНИ

НЬЮ-ЙОРК, августăн 20-мĕшĕ. (ТАСС). США-н государство секретарĕ Бирнс печет представителĕсене çапла каласа панă:

«Берлинри конференции пĕлтерĕвĕн 10-мĕш параграфĕнче çапла каланăччĕ: интересленекен виçĕ правительство Финляндипе дипломатиллĕ çыхăну пуçласа ярас ыйтăва кашни уйрăммăн тĕпчесе вĕренеççĕ. Эпир хамăр илнĕ пур пĕлтерӳсене те тĕпчесе вĕреннĕ хыççăн, Пĕрлешӳллĕ Штатсен правительстви çапла вывод турĕ: 1945 çулхи мартăн 19-мĕшĕнче Финляндире парламента суйлани тĕрĕс пулса иртнĕ. Суйлавсем кунта ирĕклĕн, вăрттăн сасăланипе пулчĕç, вĕсем финн халăхĕн демократиллĕ шухăш-кăмăлĕсене кăтартса пачĕç. Финлянди правительствине улăштарнă: пирĕн правительство шучĕпе, унăн составне халĕ Финляндири политикăллă пурнăçăн пур демократиллĕ элеменчĕсем те кĕреççĕ. Çакна шута илсе ĕнтĕ Пĕрлешӳллĕ Штатсен Финляндири представительне Финлянди правительствипе Пĕрлешӳллĕ Штатсемпе Финлянди хушшинче дипломатиллĕ çыхăнусем пуçласа яма сĕнӳ пама хушнă».

БОЛГАРИН ХАЛĂХ ПУХĂВНЕ СУЙЛАС УМĔН

СОФИЯ, августăн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Софири радио пĕлтернĕ тăрăх, августăн 21-мĕшĕнче Болгарин шалти ĕçсен министрĕ Антон Югов мĕнпур облаçсен директорĕсене, уездсен управителĕсене суйлавсене августăн 26-мĕшĕнче вăхăтра тата тĕрĕс ирттерме хушнă. Югов хушнă тăрăх, суйлавсен результачĕсене шалти ĕçсен министерствине августăн 27-мĕшĕнче шăп çурçĕрте тăратмалла.

США-н ГОСУДАРСТВО ДЕПАРТАМЕНЧĔН ЗАЯВЛЕНИЙĔ

ВАШИНГТОН, августăн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Государство департаменчĕ çапла пĕлтернĕ: Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем Грецири суйлавсене пулăшас тесе, акăлчансемпе тата французсемпе килĕштерсе ĕçлемешкĕн Греције мисси яма хатĕр: «Ку решение,—тенĕ заявленире, — Греци влаçĕсем 1945 çулхи февралĕн 12-мĕшĕнче Варкизăра тунă килĕшĕве пурнăçа кĕртмелли мел вырăнне хурса ывăрĕç. Çав килĕшĕвĕн 9-мĕш параграфĕнче Грецири плебисцита тата суйлавсене ирттернĕ чухне союзниксем пулăшу парассине палăртнăччĕ. ССР Союзĕ ку задачăна татса парас ĕçе хутшăнма килĕшмерĕ, çавăнпа та эпир ăна Грецири лару-тăру çинчен тĕплĕн пĕлтерсе тăрăпăр».

ФРАНЦИН ЮТ ÇĔРШЫВ ĔÇĔСЕН МИНИСТЕРСТВИ КАЛАРНĂ КОММЮНИКЕ

ПАРИЖ, августăн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Франс пресс агентстви ют çĕршыв ĕçĕсен министерстви кăларнă пĕлтерĕве парать.

Унта çапла каланă: Франци республикин вăхăтлăх правительстви Америка тата Британи правительствисем Грецири суйлавсене асăрхаса пымалли контроль комиссин ĕçĕсене хутшăнма сĕннине йышăннă.

СОВЕТ СОЮЗĔН ПОСЛАННИКĔ С. И. КАВТАРАДЗЕ РУМЫНИЕ ÇИТНИ

БУХАРЕСТ, августăн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Румынири радио çапла пĕлтерет: августăн 22-мĕшĕнче Совет Союзĕн Румынири чрезвычайнăй тата полномочнăй посланникĕ С. И. Кавтарадзе Мускавран Бухареста çитнĕ. Аэродромра ăна çаксем хирĕç тухса кĕтсе илнĕ: премьер-министрăн заместителĕ—ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Татареску господин, министрсен совечĕн генеральнăй секретарĕ Эмиль Бондарашу, Румынин Совет Союзĕнчи чрезвычайнăй посланникĕ профессор Иоргу Мордану тата ыттисем те.

Советсем енчен С. И. Кавтарадзе юлташа çаксем хирĕç тухса кĕтсе илнĕ: политика советникĕ Павлов, генерал-лейтенант Виноградов тата ыттисем те.

МИХАЛЧЕВ ПРОФЕССОР—БОЛГАРИН СОВЕТ СОЮЗĔНЧИ ПОСЛАННИКĔ

СОФИЯ, августăн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Болгари правительстви Болгарин Совет Союзĕнчи чрезвычайнăй посланникĕ тата полномочнăй министрĕ пулма Болгари Наука академийĕн президентне Димитрий Михалчев профессора уйăрса лартнă.

ХРОНИКА

ССР Верховнăй Совет Президиумĕ Степан Павлович Кирсанов юлташа Совет Союзĕн Болгарири чрезвычайнăй тата полномочнăй посланникĕ пулма уйăрса лартнă.

Ответлă редактор
В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ШУПАШКАРТИ ЭНЕРГЕТИКА ТЕХНИКУМĔ 1945—46 ВĔРЕНӲ ÇУЛНЕ I, II, III ТАТА IV-МĔШ КУРССЕНЕ ВĔРЕНМЕ ИЛЕССИ ÇИНЧЕН ПĔЛТЕРЕТ.

Техникумра дизель, теплотехника тата строительство отделенийĕсем пур.

Техникум çакăн пек специалистсене вĕрентсе кăларать: хулари дизельлĕ электростанцисем валли—техник-дизелистсем, теплоэлектростанцисем валли—техник-теплотехниксем, хулари промышленность тата гражданла строительство валли—техник-строительсем.

Техникумра 4 çул вĕренмелле.

Техникума ССР Союзĕнчи пур граждансене те, 14 çултан пуçласа 30 çула çитнисене, 7 çул вĕренмелли шкултан вĕренсе тухнисене тата кĕмелли экзаменсем ăнăçлă панисене илеççĕ. Чи малтанах Отечественнăй вăрçă инвалидĕсене илеççĕ.

1943—44 тата 1944—45 вĕренӳ çулĕсенче туллимар вăтам шкултан вĕренсе тухнисене, вăтам шкулăн 7-мĕшпе 8-мĕш класĕсенче вĕреннисене тата Отечественнăй вăрçă инвалидĕсене, вĕсем хăçан вĕренсе тухнине пăхмасăрах, тĕп предметсемпе отлично вĕренсе пынă пулсан, техникумăн 1-мĕш курсне экзаменсăрах илеççĕ.

Вăтам шкулăн 9-мĕшпе 10-мĕш класĕсенче вĕреннĕ çынсене техникумăн II-мĕш курсне экзаменсăр илеççĕ, анчах вĕсен техникумăн 1-мĕш курсĕнче вĕреннĕ специальнăй дисциплинăсемпе зачетсем памалла пулать. Кунсăр пуçне вăтам шкулăн 10-мĕш класĕнчен вĕренсе тухнисене тата ытти тĕрлĕ вăтам шкулсенчен вĕренсе тухнисене, хăйсен специальноçне улăштарма шут тытнăскерсене, техникумăн пур отделенийĕсенчи III-мĕш курсне те экзаменсăрах илеççĕ.

IV-мĕш курса дизель отделенине кăна илеççĕ. IV-мĕш курса тĕрлĕ сăлтав пирки энергетика техникумĕсенчи çакăн пек специальноçлă отделенисенче вĕренсе тухайманнисене, IV-мĕш курсран е III-мĕш курса пĕтернĕ хыççăн пăрахса кайнăскерсене илеççĕ.

Строительство отделенин пур курсĕсене те, 1-мĕш курссăр пуçне, малтан Коммунальнăй строительство техникумĕн студенчĕсем пулнă çынсене, тĕрлĕ сăлтав пирки техникумран пăрахса кайнăскерсене илеççĕ.

Хăш отделение тата курса кĕресси çинчен заявленисене августăн 31-мĕшĕччен çакăн пек документсемпе пĕрле ярса памалла: ăçта мĕн чухлĕ вĕреннине кăтартакан свидетельство, çуралнине кăтартакан свидетельство, автобиографи, Хĕрлĕ Çар тĕлĕшпе мĕнле шутра тăнине кăтартакан справка (ăна çара каймаллисем яраççĕ), виçĕ сăнӳкерчĕкĕ. Документсене пурне те хăйсене, копийĕсене мар ямалла. Паспортсене хăйсен пырса кăтартмалла.

Кĕмелли экзаменсем çичĕ çул вĕренмелли шкулăн программи тăрăх вырăс чĕлхипе тата математикăпа (сăмахпа каласа тата çырса), Конституципе (сăмахпа каласа) сентябрĕн 3-мĕшĕпе 10-мĕшĕ хушшинче пулаççĕ. Техникумра 1945 çулхи сентябрĕн 17-мĕшĕнче вĕрентме тытăнаççĕ.

Ытти техникумсене вĕренме кĕмелли экзаменсем панă çынсене, анчах та вырăн çук пирки вĕренме илменскерсене, экзамен листокне тата тивĕçлĕ документсене кăтартнă хыççăн, экзаменсăрах вĕренме илеççĕ. Кун пек çынсен техникума вĕренме кĕмешкĕн сентябрĕн 27-мĕшĕччен пымалла.

Техникума вĕренме кĕмелли экзаменсем пама ирĕк панисене, çавăн пекех тата техникума вĕренме илнисене те уйрăм хут ярса чĕнсе илеççĕ.

Техникума вĕренме илнисене стипенди тата иккĕмĕш категорири рабочисемпе пĕртан п одовольстви карточкисем параççĕ.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, Плеханова, 7, Энерготехникум Приемная комиссия.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместителĕн — 2—89, секретариатăн — 4—25, пропаганда пайĕн — 2—89, парти пурнăç пайĕн 3—33, промышленность пайĕн — 3—97, ялхуçалăх пайĕн — 3—99, рабсельнорсен пайĕн — 0—67, издательство конторин — 0—23.

НТ 00221 Типография №1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2, ф. б. 59 42 п. п. Тираж 16.000